ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙӖНЧЕ ПРАВĂН ТАВРАЛĂХ ХУТЛĂХНЕ СЫХЛАССИПЕ ТАТА ЭКОЛОГИ ХĂРУШСĂРЛĂХНЕ ТИВĔÇТЕРЕССИПЕ ÇЫХĂННĂ УЙРĂМ ХУТШĂНĂВĔСЕНЕ ЙĔРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийĕнче правăн тавралăх хутлăхне сыхлассипе тата экологи хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе çыхăннă уйрăм хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен" 2016 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнчи 3 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2016, 3 №; 2017, 2 №; "Республика" хаçат, 2018, ака уйăхĕн 4-мĕшĕ; 2019, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2023, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 27^1 статьяра:

а) иккĕмĕш абзаца "аталантарас" сăмах хыççăн "тытăмне" сăмах хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса пиллĕкмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"тавралăх хутлăхĕн тăрăмĕ çинчен халăха информацип тивĕçтерес ĕçе хутшăнса;";

б) пиллĕкмĕш абзаца улттăмĕш абзац тесе шутлас;

2) çакăн пек çырса 27^{1-1} статья хушса хурас:

"27^{1-1} статья. **Чăваш Республикин территорийĕнчи экологи вĕренĕвĕн тата экологи çут ĕçĕн тĕп принципĕсем**

Чăваш Республикин территорийĕнчи экологи вĕренĕвĕн тата экологи çут ĕçĕн тĕп принципĕсем çаксем пулса тăраççĕ:

1) экологи вĕренĕвĕн тата экологи çут ĕçĕн тытăмне аталантарма лайăх условисем туса парасси;

2) экологи вĕренĕвĕн системăлăхĕ тата комплекслăхĕ;

3) экологи вĕренĕвне Чăваш Республикин территорине çирĕппĕн аталантарас тĕллевлĕ тăвасси;

4) экологи вĕренĕвĕ çут çанталăкпа усă курассине вырăнлăрах тумалли практика задачисене пурнăçлас, çут çанталăка упрас тата тавралăх хутлăхĕн пахалăхне лайăхлатас енлĕ пулни;

5) тавралăх хутлăхĕн тăрăмĕ çинчен калакан информаци уççăнлăхĕпе тивĕçеслĕхĕ;

6) граждансем, общество пĕрлешĕвĕсем тата ытти организацисем экологи вĕренĕвĕн тата экологи çут ĕçĕн тытăмне аталантарас ĕçе хутшăнасси.";

3) çакăн пек çырса 27^{4} тата 27^{5} статьясем хушса хурас:

"27^{4} статья. **Экологи вĕренĕвĕ тата экологи çут ĕçĕ енĕпе ĕçлекен общество пĕрлешĕвĕсене тата коммерциллĕ мар ытти организацисене патшалăх енчен пулăшасси**

1. Экологи вĕренĕвĕ тата экологи çут ĕçĕ енĕпе ĕçлекен общество пĕрлешĕвĕсен тата коммерциллĕ мар ытти организацисен Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче социаллă тĕллевлĕ коммерциллĕ мар организацисене пулăшу парасси çинчен" 2011 çулхи авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 61 №-лĕ саккунĕпе палăртнă майсемпе тата тĕслĕхсенче Чăваш Республикин территорийĕнче патшалăх пулăшăвне илме право пур.

2. Экологи вĕренĕвĕ тата экологи çут ĕçĕ енĕпе ĕçлекен общество пĕрлешĕвĕсене тата коммерциллĕ мар ытти организацисене патшалăх пулăшăвне вăйра тăракан саккунсене хирĕçлемен ытти майсемпе пама пултараççĕ.

27[5] статья. **Экологи вĕренĕвĕ тата экологи çут ĕçĕ енĕпе ĕçлекен граждансен, общество пĕрлешĕвĕсен тата коммерциллĕ мар ытти организацисен прависем**

Экологи вĕренĕвĕ тата экологи çут ĕçĕ енĕпе ĕçлекен граждансем, общество пĕрлешĕвĕсем тата коммерциллĕ мар ытти организацисем çапла тума пултараççĕ:

1) экологи вĕренĕвĕ тата экологи çут ĕçĕ енĕпе тăвакан ĕçсене лаййăхлатас тата пурнăçлас тĕлĕшпе сĕнӳсем пама, çавăн пекех вĕсене пурнăçлас ĕçе хутшăнма;

2) экологи вĕренĕвĕ тата экологи çут ĕçĕ енĕпе ĕç-хĕле пурнăçлама кирлĕ пулакан тавралăх хутлăхĕн тăрăмĕ çинчен калакан тĕрĕс информацие палăртнă йĕркепе ыйтма тата илме;

3) обществăра экологи культурине йĕркелес тата пысăклатас тĕллевпе çут çанталăка сыхлас тĕллевлĕ ĕçсем, çав шутра территорисене тирпейлем кĕртес тата йывăç-курăк лартас енĕпе субботниксем, конкурссем, фестивальсем, выставкăсем, конференцисем, семинарсем, информаци ĕçĕсем тата ытти ĕçсем тума;

4) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе пăхса хăварнă ытти правасене пурнăçлама.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çу уйăхĕн 21-мĕшĕ
35 №